Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчене тухать

97 (8163) № * Юн кун, 2013 ҫулхи раштав (декабрь) уйӑхӗн 25-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

Раҫҫейре

## Пӗрлехи ларӑва хутшӑннӑ

Декабрӗн 23-мӗшӗнче Мускавра РФ социаллӑ пурнӑҫпа экономика аталанӑвӗн тӗллевлӗ кӑтартӑвӗсене пурнӑҫланин мониторингӗ енӗпе РФ Патшалӑх Канашӗпе Раҫҫей Президенчӗ ҫумӗнчи комиссин пӗрлехи ларӑвӗ иртнӗ. Ӑна Раҫҫей Президенчӗ Владимир Путин иртернӗ. Унта Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев та хутшӑннӑ.

Ларӑва социаллӑ политика сферинче Президент указӗсене мӗнле пурнӑҫланине халалланӑ.

Республикӑра

## Пӗр-пӗринчен ыйтса илеҫҫӗ

Ведомствӑсем хӑйсен хушшинчи электрон ҫыхӑнупа усӑ курса Чӑваш Енре ҫынсен запросӗсен 78,3 процентне пӗр-пӗринчен ыйтса илеҫҫӗ.

Аса илтеретпӗр, 2012 ҫулхи июльтенпе влаҫ органӗсен ытти органсенче пур сведенисене ҫынсенчен ыйтмалла мар. Кирлӗ информацие регион, федераци тата вырӑнти влаҫ органӗсен пӗр-пӗринчен ыйтса илмелле. Граждансем хӑйсене мӗнле ӗҫ хучӗ кирлине кура пурӗ те 19 тӗрлӗ документ кӑна пама тивӗҫ, вӑл шутра – паспорт, водитель прави тата ытти те.

Ҫак тытӑм пур вӑйпа ӗҫлесе ятӑр тесе ЧР Информполитика министерстви ҫынсене услугӑпа тивӗҫтерекен вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен, ял тӑрӑхӗсен, хӳтлӗх пайӗсен тата ытти ведомствӑсен сотрудникӗсемпе вӗренӳсем ирттерет. Кунсӑр пуҫне электрон ҫыхӑнупа ӗҫлеме май паракан ятарлӑ портал та йӗркеленӗ, ҫак тытӑмра ӗҫлеме вӗрентекен инструкцисем те хатӗрленӗ.

Пянхи кун ҫак мелпе Чӑваш Енре 96 тӗслӗ услугӑпа 291 ял тӑрӑхӗ, 26 муниципалитет тата ӗҫ тӑвакан 15 орган тивӗҫтерет.

Олимп ҫулӑмӗн эстафети

## Автотранспорт ҫӳрессине чикӗлеҫҫӗ

***Декабрӗн 27-мӗшӗнче Шупашкар хули Олимп ҫулӑмне кӗтсе илет. Ҫавӑн пирки 10 сехетрен пуҫласа 22 сехетчен хулара автотранспорт ҫӳрессине чикӗлеҫҫӗ.***

*Олимп ҫулӑмӗн эстафети Привокзальная урампа, Ленин проспекчӗпе, Николаев, Калинин, Текстильщиксен, Зоя Яковлева, И. Франко урамӗсемпе, Казански набережнӑйпе, Юхан шыв порчӗпе, К. Иванов урамӗпе, Мускав проспекчӗпе, М. Горький проспекчӗпе, Университетская урампа, Павлов мичман, Гузовский урамӗсемпе, Нижегородская урампа, Президент бульварӗпе, К. Маркс, Гагарин, Чапаев, Цивильская урамсемпе иртет.*

*Ҫак кун хула ҫыннисене харпӑр хӑйӗн транспорт хатӗрӗпе ҫула тухассинчен тытӑнса тӑма ыйтаҫҫӗ.*

Раштавӑн 27-мӗшӗ – Раҫҫейри ҫӑлавҫӑ кунӗ

## «Пулӑшупа кӗттерместпӗр»



***Сывӑ пурнӑҫ йӗрки – района, республикӑна, Раҫҫее малалла аталантармалли тӗп ҫул-йӗр. Ҫакна кашниех ӑнланать, анчах хушӑран сиксе тухакан чрезвычайлӑ лару-тӑрура кирлӗ пулакан вӑхӑтлӑ пулӑшу нумай пурлӑха, ҫын пурнӑҫне ҫӑлма пултарать. Кунта вара кирлӗ пулса тухсан районти ҫӑлавҫӑсен нумай кӗттермеҫҫӗ. Акӑ черетлӗ караулти Петр Петровна Вячеслав Скворцов (сӑн ӳкерчӗкре сулахайри тата сылтӑмри) водительсем пушар хуралӗнче 24 тата 11 ҫул служба тӑраҫҫӗ. Чӗннӗ ҫӗре вӑхӑтра ӗлкӗрни ҫеҫ пысӑк ҫухатусенчен сыхланма пулӑшнине ӑнланса ӗҫе тухаҫҫӗ вӗсем. 37-мӗш номерлӗ пушар чаҫӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ Александр Кирьянов та хӑй ялта ҫуралса ӳснӗрен ял ҫыннисем хушшинче профилактика еплерех ирттермеллине ӑнланнине пӗлтерчӗ. «Хамӑр ӗҫе пӗлетпӗр. Ҫавӑнпах пушар тухасласлӑха та вӑхӑтра ҫӑварлӑхлама пултаратпӑр», – терӗ Александр Юрьевич пушар машинисем ҫула тухма ялан хатӗр пулнине палӑртса.***

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Черетсӗр лару

## Депутатсем активлӑ пулчӗҫ

Декабрӗн 23-мӗшӗнче район администрацийӗн ларусен залӗнче депутатсен районти Пухӑвӗн черетсӗр 31-мӗш ларӑвӗ ӗҫлерӗ. Ларӑва депутатсемсӗр пуҫне район администрацийӗн пай пуҫлӑхӗсем те хутшӑнчӗҫ.

Депутатсем ларура пӑхса тухма кун йӗркине икӗ ыйту кӗртме ыйтшӑнчӗҫ: «Муркаш район территорийӗнчи патшалӑх экологи экспертизин объекчӗсене халӑхпа сӳтсе явассине йӗркелесе ирттерессин йӗркине ҫирӗплетессси ҫинчен» тата «Депутатсен районти Пухӑвӗн 2014 ҫулхи ӗҫ планӗ ҫинчен».

Кун йӗркине кӗртнӗ пӗрремӗш ыйтупа район администрацийӗн экономика тата агропромышленноҫ комплексне аталантарассин пайӗн пуҫлӑхӗ Нина Костина тухса каларӗ. Депутатсем ыйтӑва сӳтсе явнӑ хыҫҫӑн район территорийӗнчи патшалӑх экологи экспертизин объекчӗсене халӑхпа сӳтсе явассине йӗркелесе ирттерессин йӗркине ҫирӗплетрӗҫ.

Депутатсен районти Пухӑвӗн ҫитес ҫулхи ӗҫ планне сӳтсе явнӑ ҫӗре депутатсем активлӑ хутшӑнчӗҫ. Вӗсен сӗнӗвӗсене шута илсе унччен палӑртнӑ ӗҫ планне ытти ыйтусем те кӗртрӗҫ. Вӗсен шутӗнче район администрацийӗн пуҫлӑхӗн тата район пуҫлӑхӗн отчечӗсене, ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсемпе депутатсен районти Пухӑвӗн депутачӗсен хӑйсен тивӗҫӗсене мӗнле пурнӑҫласа пыни пирки информацисем итлессине, РФ Шалти ӗҫсен министерствин районти пайӗн, пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑхӑн, пушар хӑрушсӑрлӑхӗн ӗҫӗ-хӗлӗпе, ҫитес ҫул района Культура ҫулталӑкӗ ирттерессипе ҫыхӑннисем т. ыт. те.

Лару вӗҫӗнче депутатсен районти Пухӑвӗн председателӗ Игорь Николаев Пухӑвӑн кӑҫалхи ӗҫӗ-хӗлӗ пирки каласа пачӗ, Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ Владимир Путин РФ Федераци Пухӑвне тата Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашне янӑ Ҫырусен уйрӑм саманчӗсем ҫинче чарӑнса тӑчӗ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Ҫырӑнтару – 2014

## Виҫӗ кун юлчӗ!

**Декабрӗн 27-мӗшӗччен «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата 2014 ҫулхи январьтен илсе тӑма ҫырӑнтараҫҫӗ. Хаҫата 6 уйӑха ҫырӑнмалли хак – 216 тенкӗ те 30 пус.**

**Хаклӑ вулаканӑм! Малашне те пӗрле пулар!**

РАЙОНТА: ӗнер, паян, ыран

## Тӗп тимлӗхре – ӗҫлекенсен интересӗсем

«Профсоюз членӗсен социаллӑ тата ӗҫ прависемпе интересӗсене хӳтӗлесси – пирӗн тӗп задача», – палӑртнӑ патшалӑх учрежденийӗсенче ӗҫлекенсен профсоюзӗн Чӑваш Республикинчи организацийӗн председателӗ Иван Анисимов. Декабрӗн 23-мӗшӗнче вӑл пирӗн районта пулнӑ. Патшалӑх учрежденийӗсенче ӗҫлекенсен профсоюзӗн Муркаш райкомӗн членӗсемпе тӗл пулу район администрацийӗн ларусен пӗчӗк залӗнче иртнӗ. Унта район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ростислав Тимофеев та хутшӑннӑ.

Иван Алексеевич палӑртнӑ тӑрӑх хальхи вӑхӑтра Раҫҫейӗпе патшалӑх учрежденийӗсемпе социаллӑ пулӑшу ӗҫчӗнӗсен профсоюзӗнче пӗр миллион ҫынна яхӑн шутланать. Муркаш районӗ 19669 пуҫламӑш организаци хушшинче ӑнӑҫлисенчен пӗри. И. Анисимов профсоюз активне хастар ӗҫшӗн тав тунӑ, чи активлисене Хисеп грамотисемпе асӑнмалӑх парнесем панӑ.

## 1 литрӗ – 20 тенкӗ

Районта пурӑнакан ҫынсен килти хуҫалӑхӗсенчен сӗт пухакансенчен илнӗ даннӑйсене пӗтӗмлетнӗ май ҫакӑ паллӑ. Декабрӗн 19-мӗшӗ тӗлне сутӑн илекен сӗт хакӗ вӑтам шутпа 20 тенкӗпе танлашать. Ку вӑл иртнӗ ҫулхи ҫав вӑхӑтринчен 54 процент хаклӑрах.

Ҫынсем кунсерен ҫак продукцие 25 – 26 тонна ӑсатаҫҫӗ. Унченхи пекех сӗт пухассипе Муркаш райповӗ ӑнӑҫлӑ ӗҫлет. Потребительсен обществи ял ҫыннисенчен кунсерен 7 тонна сӗт пухать.

## Ӗҫсӗррисем 55 ҫын

Кӑҫал декабрӗн 23-мӗшӗ тӗлне ӗҫ шыраса районти ӗҫпе тивӗҫтерекен центра 1216 ҫын пынӑ. Ӗҫсӗррисем тесе официаллӑ регистрациленисем ҫак вӑхӑта 55 ҫын. Ӗҫсӗрлӗх шайӗ 0,27 процент. Ҫынсем валли ӗҫе вырнаҫма вакансисем пурри пирки 30 предприяти информаци тӑратнӑ, пӗтӗмпе 122 вакансии пур.

Иртнӗ тапхӑрта яланхи тата вӑхӑтлӑх ӗҫсене 1107 ҫынна вырнаҫтарнӑ. Вӑл шутран 90 ҫынна общественнӑй ӗҫсене явӑҫтарнӑ, 14 – 18 ҫулсенчи 600 ҫамрӑка тата ӗҫсӗр 5 ҫынна вӑхӑтлӑх ӗҫ тупса панӑ, Раҫҫейӗн ытти регионӗсене 20 ҫынна ӗҫлеме янӑ.

**В. ШАПОШНИКОВ хатӗрленӗ.**

Чӗререн тухакан сӑмахсем

## *Саламлатпӑр*



Пирӗн юратнӑ, хаклӑран та хаклӑ аттепе аннене – Муркашра пурӑнакан **Прасковия Викторовнӑпа Николай Петрович КЛЕМЕНТЬЕВСЕНЕ** ылтӑн туйпа чӗререн тухакан ӑшӑ та ҫепӗҫ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Сывлӑхӑр сирӗн юман пек ҫирӗп пултӑр, кун-ҫулӑр юхан шыв пек вӑрӑм та телейлӗ килтӗр, вӑй-халӑр ҫӑл куҫ пек тапса тӑтӑр. Эпир сире юрататпӑр, хисеплетпӗр. Пире савӑнтарса пурӑнма Турри сире вӑрӑм кун-ҫул парнелетӗр.

**Саламлаканӗсем: хӗрӗсем, кӗрӳшӗсем, 2 мӑнукӗ, кӗҫӗн мӑнукӗ Женя, Софроновсен тата Кузнецовсен ҫемйисем, тӑванӗсем.**



Хисеплӗрен те хисеплӗ, ылтӑнкӗмӗлтен те хаклӑрах, хӗвелтен те ӑшӑрах, ҫӗр ҫинчи чи юратнӑ ҫыннӑмӑра – Москакасси ялӗнче пурӑнакан **Римма Геннадьевна ПЕТРОВАНА** 50 ҫул тултарнӑ ятпа ӑшшӑн саламлатпӑр. Юман пек ҫирӗп сывлӑх, тапса тӑракан ҫӑл куҫ пек иксӗлми вӑй-хал, тумхахсӑр кун-ҫул, телей сунатпӑр. Санӑн ялан хавас кӑмӑл пултӑр, чун ӑшши нихӑҫан та ан иксӗлтӗр. Эс пуррипе Турра тав тумашкӑн сӑмах та ҫитмест. Ырӑ кӑмӑлушӑн, йывӑр вӑхӑтра сан ҫунаттусем айӗнче канлӗх те ӑнланулӑх тупма пулӑшнӑшӑн, пирӗншӗн тӑрӑшнӑшӑн ҫӗре ҫити тайма пуҫ. Эпир сана юрататпӑр, санпа мухтанатпӑр.

**Ӑшӑ салампа: мӑшӑрӗ, ывӑлӗсем, хӗрӗ, кинӗсем, мӑнукӗсем, тӑхлачисем тата ҫывӑх тӑванӗсем.**

# Чăваш Ен Пуçлăхĕн Çырăвне сÿтсе яватпăр



**Республика Пуçлăхĕн Çырăвĕ тĕлĕшпе хăй шухăш-кăмăлне район пуçлăхĕ, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн ертÿçи Игорь Николаев пĕлтерет:**

– Михаил Васильевич влаç органĕсемпе обществăн уйрăмах тимлĕх кирлĕ сапманчĕсем çинче чарăнчĕ, çавна май пирĕн ума пысăк тĕллевсем лартрĕ.

Патшалăх влаçĕпе граждан обществи хушшинчи ĕçлĕ çыхăнăва тачăрах йĕркелеме çын тата ача прависемпе тимлекен, çавăн пекех нумаях пулмасть вăя кĕртнĕ предприниматель прависене хÿтĕлес енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйсем (район шайĕнче те кĕçех пулмалла) туса хучĕç. Ман шухăшпа çакăн пек йĕркелÿ питĕ кирлĕ. Вăл патшалăх влаçĕпе граждан обществине çывăхлатма, ку тĕлĕшри проблемăна май пур таран хăвăртрах уçăмлатма май парать.

Пытарма кирлĕ мар пулĕ, пирĕнте ытларах чухне мĕн те пулин пĕлтерĕшлине тума çунни мар, янттине кĕтес шухăшлав тĕпре тăрать. Çакă, паллах, кулленхи аталанура пысăк чăрмав пулса тăрать.

Эпĕ ял хуçалăх ĕçĕпе тачă çыхăннă, çĕр çинче тимлекенпе куллен калаçатăп, çавна май вĕсен проблемине, вăл шутра çемье проблемине те аван туятăп. Çĕр – пирĕн тĕп пуянлăх, çакă мĕн авалтан çапла пулнă, пулать те. Çавăнпа та унпа тĕллевлĕ усă курмалла, вăл ултавçăсемшĕн услам çăл куçĕ пулмалла мар. Катькас ял тăрăхĕнчи тĕллевсĕр усă курнă çĕр лаптăкĕ шăв-шав самай çĕклерĕ. Халĕ çак ресурса социаллă нуша валли уйăрнă, питĕ тĕрĕс утăм. Кунта вара тĕпре – çамрăк çемье, вăл шутра ачапăча ăнăçлăхĕ. Вĕсенче тухăçлă пуласлăха курма пултармалла пирĕн.

Михаил Васильевич ял хуçалăхне аталантарасси республика экономика политикин тĕп çул-йĕрĕсенчен пĕри шутланнине палăртрĕ. Çакă çĕр ĕçченне малашне те шанăçпах пурăнма, çăмăл мар отрасльте ытларах тимлеме хавхалантарать. Çапла вара Чăваш Республики патшалăх пулăшăвне çĕр ĕçченĕ патне, апла пулсан пирĕн пата, тÿрремĕн çитерес енĕпе – Раççейри чи лайăх регион шутĕнче. Çавăн пекех пĕчĕк калăпăшлă хуçалăхсем те пулăшуран аякра юлмаççĕ. Акă иртсе пыракан çулталăкра пирĕн районти виçĕ хресчен (фермер) хуçалăхĕ грантсене тивĕçрĕ, унччен вара иккĕ пулнăччĕ.

Патшалăх ял хуçалăх ĕçĕ çине пысăк тимлĕх уйăрнине тепĕр самант та çирĕплетет. Çитес çултан пуçласа ял хуçалăх техникине туянма тăкакланин 15 процентне патшалăх саплаштарать. Çак утăм ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсене техника тата технологи тĕлĕшĕнчен пуянланма май парать. Иртнĕ çулсенчи çанталăкăн йывăр условийĕсем çĕр ĕçченне самай чăрмав кÿчĕç. Çапла вара çĕнĕ йышши техникăпа усă курни пысăкрах тухăç илме тата йывăр условире те вырма вăхăтне самай кĕскетме тата тухăç çухатăвне те чакарма май памалла. Хуçалăхсенчи машинăпа трактор паркне çĕнĕ техника-агрегатпа пуянлатни перекетлĕ тата тухăçлă пулнăран Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ку енĕпе ытларах ĕçлеме тăрăшать. Районти хăш-пĕр хуçалăхсем те çак тĕлĕшпе пуçаруллă, хресчен (фермер) хуçалăхĕсене те ырăпа асăнмалла.

Çак саманта палăртмасăр иртес килмест, çĕр ĕçченĕн нуши нумай.

Эпир, ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсем, хамăр явăçтаракан çăмăллăхлă кредитсем енĕпе процент ставкисене субсидилеме уйăракан укçа-тенкĕ çителĕксĕррине туятпăр. Çак ыйту çивĕч пулнăран Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерстви ку енĕпе ытларах тимлеме палăртни, паллах, кăмăллă.

Шел пулин те, ял хуçалăхĕнче тимлекенсен ĕç укçи пысăк мар. Çавăнпах та пулĕ вăйпитти арçынсенчен чылайăшĕ аякка кайма тăрăшать. Республика Пуçлăхĕ те ку енĕпе кăмăлсăр. Çемьесем, кĕске вăхăтлăх пулин те, кил хуçисĕр тăрса юлни йĕркеллĕ пулăм мар. Çавăнпа пирĕн тивĕçлĕ ĕç укçиллĕ ĕç вырăнĕсем ытларах тума майсем тупмалла. Çапла майпа арçынна çемьерех хăварма тăрăшмалла. Çирĕп çемьесем ытларах пулсан çĕр-шыв та тĕреклĕ пулĕ.

Тимлемелли вара пирĕн сахал мар, ĕçлессишĕн кăна ĕçе утмалла мар. Пурнăçа тухăçлăрах тăвас тесе производствăна ытларах аталантармалла, туса кăларакан продукци шайне ÿстермелле, тăкаксене чакарма майсем тупмалла. Кунта манăн «Çеçпĕл» предприяти пирĕншĕн ырă тĕслĕх пулнине палăртас килет.

Иртнĕ çул Тавралăха хÿтĕлемелли çулталăк пулчĕ. Çак ĕç шайĕнче районта, вăл шутра ял тăрăхĕсенче те курăмлă сахал мар ĕç пурнăçларăмăр. Çитес çул вара Раççейре Культура çулталăкĕ пулĕ. Çак ăнлавăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Пирĕн район хăй историйĕпе, йăли-йĕркипе, паллă вырăнсемпе, пултаруллă çынсемпе пуян. Вĕсене пирĕн аталантармалла тата упрамалла. Апла пулсан тăван ен ырлăхĕпе ăнăçлăхĕшĕн яваплă пулмалла.

Эпĕ вара самантпа усă курса пурне те çитсе килекен Çĕнĕ çулпа саламлатăп, тăнăçлăхпа килĕшÿ, чи кирли вара çирĕп сывлăх сунатăп.

– Хăвăра тавах калаçăва хутшăнма кăмăл тунăшăн тата вăхăт тупнăшăн. Хуçалăх тата район шайĕнчи тилхепене пĕлсе тытса пыма çăмăл мар. Мĕн пур йывăрлăха çĕнтерме вăй-хăват пултăр сирĕн, тăван тăрăхра вара хăтлăх хуçалантăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

Район 70 çул тултарнă май

# Пултаруллă, ăста ертÿçĕччĕ

Пирĕн районти «Ударник» пĕрлешÿллĕ хуçалăх йĕркеленнĕренпе 40 çул çитрĕ. Унăн пĕрремĕш директорĕ пулса 1973 – 1979 çулсенче Александр Михайлов, 1979 – 1981 çулсенче Зиновий Кутузов, 1981 – 2012 çулсенче Платон Давыдов ĕçленĕ, халĕ Владимир Федоров тимлет.

Кунта эпĕ совхоз пуçланнă вăхăтри малтанхи ертÿçĕ çинчен çырса кăтартасшăн. «Ударник» хуçалăх йĕркелениччен пирĕн тăрăхра пурĕ 4 колхоз пулнă: «Знамя коммунизма» – Йÿçкасси ялĕ тăрăхĕнчи ялсен, «Ударник» – Матьăк енчи ялсен, «Труд» – Вăрманкасси енчисен, «Ленинец» – Панкли тăрăхĕнчисен.

Çак колхозсем 1973 çулта пĕрлешсе «Труд» колхоз председательне Александр Михайлова пысăк хуçалăха ертсе пыма суйларĕç. Мĕншĕн тесен асăннă колхоз ыттисемпе танлаштарсан пур енĕпе те малта пулнă: сĕт сăвассипе те, аш-пăш е тырă-пулă туса илессипе те.

Малтанхи 3 колхоз пĕрлешсе «Ударник» совхоз туса хураççĕ. Пĕрлешÿре – вăй. Совхоз вăйлă аталанса пыма пуçлать. Вăл вăхăтра ялсенче асфальт сарнă çулсем те, газ та пулман. Çумăрлă вăхăтра е ытти чухне района сĕт турттарасси е ытти тĕлĕшпе тухса çÿреме те питĕ йывăрччĕ. Апла пулин те «Ударник» хуçалăхăн ÿсĕмĕсем вăхăт иртнĕ май сулмаклăрах та сулмаклăрах пулса пычĕç. Хуçалăх çитĕнÿллĕ ĕçленине шута илсех ĕнтĕ 1976 çулта юнашарти Панкли тăрăхĕнчи «Ленинец» колхоза та «Ударникпа» пĕрлештерчĕç.

Çапла вара совхоз 13 ялтан тăракан пысăк хуçалăх пулса тăчĕ. Хуçалăхра пĕтĕмпе 5840 гектар çĕр, вăл шутран ял хуçалăх продукцийĕ туса илмеллисем 4976 гектар пулнă. Вăл çулсенче çĕр улмине те 300 гектар ытла лаптăк çинче лартса çитĕнтереттĕмĕр. Хирте çĕр улми кăлармасăр хăварни пулман. Уй-хирте акса-лартса ÿстерни харпăр хăйĕнни пекех пулнă.

Эпир хаçатсенче çынсем çинчен ытларах чухне мухтаса çырма тăрăшатпăр, çитменлĕхсене курсах каймастпăр. Мана пĕр юлташ совхоз йĕркеленсе пынă çулсенче район хаçатне совхоз çинчен хăй хурласа çырни пирки каласа пачĕ. Ăна эпĕ хам та вуланă. Статьяра ферма тата палăк йĕри-тавра тытнă карта япăхса кайни çинчен çырнăччĕ. Ăна анчахрах ĕçлеме пуçланă çĕнĕ хуçа А. Михайлов карта япăхса кайнине пăхса тухнă хыççăн совхоз кантурне чĕннĕ.

«Эсĕ тĕрĕсех çырнă. Халĕ сана пăта, хăма мĕн чухлĕ кирлĕ пулать – çыртарса ил. Çав япăхнă картасене çĕнĕрен тытăр», – хушнă хуçа статья авторне. Вăл вăхăтра арçынсем хальхи пек Мускава тата ытти хуласене ĕçлеме тухсах çÿремен. Хĕллехи вăхăтра вăрманта ĕçленĕ, йывăç каснă, хăма çурнă, совхозра фермăсем тунă çĕрте е ытти вырăнсенче ĕçленĕ.

Юлташ ун чухне ватă мар, 30 çулта анчах пулнă. Кĕске вăхăтрах вăл платниксене пуçтарса картана çĕнетсе тухнă. Александр Михайлов вĕсен ĕçне мухтанă, малашне те хушнă ĕçсене çавăн пек пурнăçлама сĕннĕ.

Александр Михайлович тĕлĕнмелле пултаруллă, пысăк тавра курăмлă ертÿçĕччĕ. Совхозра нумай çуртсене çĕнĕрен тутарма пултарчĕ. Совхоз ун чухне çĕр улми çитĕнтерессипе ытларах ĕçлеме пуçларĕ. Çавăн чухнех А. Михайловăн пултарулăхне кура хуçалăхра çĕр улмин çĕнĕ сорчĕсене туса илессипе лаборатори йĕркелеме йышăнчĕç.

«Ударник» совхоз Муркаш районĕн чапĕ те пулса тăчĕ. Республикăра та ытларах енĕпе малти вырăнсенче пулнă.

А. Михайлов Муркаш районĕнчи Автанкасси ялĕнче 1940 çулта çуралнă. «Ударник» совхозăн пĕрремĕш директорĕ пулса ĕçленĕ кĕске вăхăтрах пысăк çитĕнÿсем тума пултарчĕ. Кайран ăна хăйĕн тăван Мичурин ячĕпе хисепленекен колхозра председатель пулса ĕçлеме чĕнсе илчĕç. Унта вăл колхоза ура çине тăратма чылай тимлерĕ. Выльăх-чĕрлĕх валли пысăк витесем сахал мар тутарчĕ.

Садпа пахча çимĕç комбинатĕнче те директор пулса ĕçлерĕ. Анчах унăн ĕмĕрĕ кĕске пулчĕ. Вăл пирĕнтен 51 çултах уйрăлса кайрĕ.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**

Хурăнкасси ялĕ.

# Çынсене савăнăç парнелекенсем

**Декабрĕн 14-мĕшĕнче Турай ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакансем кунти хор коллективне йĕркеленĕренпе 95 çул çитнине савăнăçлă лару-тăрура уявларĕç. Юбилее паллă тума çынсем чылай пухăнчĕç. Хăнасем те йышлă килсе çитрĕç.**

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Лилия Тарасова, район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ Елена Чернова, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем Борис Андреев тата Юрий Романов, Турай ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Павлов, Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕ Владимир Андреев, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Юрий Жуков, «Росгосстрах» ĕçченĕсем тата Турай хорне ертсе пыракансенчен пĕри – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ, пирĕн ентеш Иосиф Александров тата ыттисем те уява хутшăнма кăмăл турĕç.

Çав уява йĕркелесе ирттерме Юрий Романов чылай тăрăшрĕ. Ăна пысăк тав сăмахĕ каласшăн. Вăл Культура çуртĕнчи фойене илемлĕ стендсемпе сăн кĕртрĕ, курав залне те илемлетме пулăшрĕ. Çавăн пекех вăл çынсене савăнтарма музыка центрĕ парнелерĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Павлов видеосăнав оборудованийĕ вырнаçтарса пама шантарчĕ. Турай шкулĕнче нумай çул хушши информатика учителĕнче ĕçленĕ Юрий Ершов та уява йĕркелеме самай пулăшу кÿчĕ. Уяв пуçланас умĕн Турай хорĕн историне сăнлакан вăл хатĕрленĕ видеофильма пăхса савăнтăмăр.

Юбилей программине Турайри Культура çурчĕ çумĕнче йĕркеленĕ художество пултарулăх коллективĕ «Ай-хай, тăвансем» сюитăпа пуçларĕ. Концерт программине вара Турай шкулĕн директорĕ Юрий Герасимов тата чăваш чĕлхипе литературин учителĕ А. Семенова ăста ертсе пычĕç. Вăл питĕ пуян та анлă содержаниллĕ пулчĕ. Пĕччен, ушкăнпа юрлакансем те нумаййăн пулчĕç. Уйрăмах шкул ачисем вырăс тата чăваш ташшисене ăста ташласа савăнтарчĕç. Сцена çинче хăйсен пултарулăхĕпе савăнтаракансем хушшинче шкулти учительсем те йышлă пулчĕç. Культура çурчĕ шкулпа тачă çыхăнса ĕçленин усси çук мар.

Хор коллективне Калерия Албутова ертсе пычĕ. Куракансем кашни номерех хапăлласа йышăнчĕç. Концерт программине хор «Чечеклен, юратнă Чăваш Ен» юрăпа вĕçлерĕ. Куракансем хор коллективне сцена çинчен ярасшăн пулмарĕç, тăвăллăн алă çупса саламларĕç.

Уяв программинчех ветерансен ушкăнĕ хорăн пĕрремĕш ертÿçи Федор Иванов çырнă юрăсене юрласа куракансене савăнтарчĕ. Уявра хорăн 70, 80, 90 çулсенчи юбилейĕсене хутшăннă юрăççем те пулчĕç. Кусем вĕсем Роза Николаева, Полина Александрова, Зоя Салтыкова, Нина Владыцкая, Зинаида Иванова, Алевтина Краснова, Эльвира Иванова, Зоя Леонтьева, Раиса Романова.

Ку уяв пурне те питĕ килĕшрĕ.

**В. СЕМЕНОВА,**
**З. ГРИГОРЬЕВА.**

Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн 2013 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнчи 1345 № йышăнăвĕпе пĕчĕк тата вăтам предпринимательство аталанăвне пысăк тÿпе хывнăшăн, чылай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн çаксене наградăланă:***

– А. Вязов ИП ĕç сыхлавĕн инженерне **Николай Венерович АЛЕКСАНДРОВА**;

– А. Вязов ИП столярне **Вячеслав Леонидович ВОЛКОВА**;

– А. Вязов ИП шлифовщикне **Валентина Геннадьевна НИКОЛАЕВĂНА**.

***Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2013 çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнчи 1353 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Алевтина Ивановна АЛЕКСАНДРОВĂНА**, «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн – ăратлă выльăхсен завочĕн бухгалтерне;

– **Альбина Димитриевна ХРОМОВĂНА**, «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕн – ăратлă выльăхсен завочĕн бухгалтерне.

***Районăн экономикипе социаллă пурнăçне аталантарма тивĕçлĕ тÿпе хывнăшăн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн район администрацийĕн 2013 çулхи декабрĕн 19-мĕшĕнчи 1376 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Алим Георгиевич АНДИАНОВА**, депутатсен Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутатне;

– **Луиза Евстафьевна АРГАНДЕЕВĂНА**, Юнкă ял тăрăхĕнчи Юнкăри информаципе культура центрĕн директорне;

– **Вениамин Витальевич БОЧКАРЕВА**, Ильинка ял тăрăхĕнчи Макаçи ялĕн старостине;

– **Игорь Илларионович ВАСИЛЬЕВА**, депутатсен Ярославка ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутатне;

– **Ольга Валерьевна ДАНИЛОВĂНА**, вăрçăпа ĕç ветеранĕсен Каршлăхри интернат çурчĕн кухня ĕçченне;

– **Владимир Иванович ИЛЬДУКОВА**, депутатсен Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутатне;

– **Ирина Владимировна ЛЕОНТЬЕВĂН**А, Муркаш ял тăрăхĕнчи Çĕньял Муркаш ялĕн старостине;

– **Геннадий Иванович МАЛИНИНА**, Йÿçкасси ял тăрăхĕнчи Актай ялĕн старостине;

– **Аркадий Николаевич СМИРНОВА**, Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Карманкасси ялĕн старостине;

– **Геннадий Алимпиевич СЕМЕНОВСКИЕ**, Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн механизаторне.

Прокуратурăран

# Социаллă учреждениесене тĕрĕсленĕ

Район прокуратурин тата ытти ведомствăсен ответлă ĕçченĕсем Каршлăхри, Йÿçкассинчи интернат çуртсене, Мăн Сĕнтĕрти вăхăтлăх пурăнмалли центра, Шомикри психоневрологи интернатне тĕрĕслевпе çитнĕ. Пушар, терроризм хăрушсăрлăхĕсене, санитарипе эпидемиологи законодательствине пăхăнман самантсене тупса палăртнă. Çавна май ку тĕлĕшпе асăннă учреждениесен ертÿçисене асăрхаттарнă.

**П. МАКЕЕВ,**
**прокурор пулăшуçи.**

Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство

# Инвестици илĕртӳлĕхĕ тĕпре пулмалла

Иртнĕ эрнере район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарассин канашĕн черетлĕ ларăвĕ пулчĕ. Ăна МСО "Моргаушская" акционерсен хупă обществин генеральнăй директорĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи обществăлла канашăн членĕ, предпринимательсен асăннă шайри канашăн ертӳçи Владислав Семенов уçрĕ тата ертсе пычĕ.

Кун йĕркинче пăхса тухма палăртнă пĕрремĕш ыйтăва район администрацийĕн экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕн пайĕн пуçлăхĕ Нина Костина тишкерчĕ.

2013 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче «Чăваш Республикинче предпринимательсен прависене хӳтĕлессин уполномоченнăйĕ çинчен» 57 № ЧР саккунĕ кун çути курчĕ. Çак çĕнĕлĕх Раççей шайĕнчи саккунпа килĕшсе ун шайĕнче пурнăçланать. Асăннă йĕркен тĕп тĕллевĕ – предпринимателе саккунлă интересĕсемпе прависене хĕсĕрленĕ, çавна май вĕсене каялла тавăрассинче витĕм кӳресси; предпринимателе унăн саккунлă интересĕсемпе прависене ăнлантарасси тата пропагандăласси; Чăваш Республикинче инвестици климачĕпе ĕçлĕ хутшăнăвне лайăхлатассине витĕм кӳресси; предпринимателĕн саккунлă интересĕсемпе прависене хӳтĕлени тата пăхăнни çинчен общественноçа пĕлтерсе тăрасси; Чăваш Республикинчи ку тĕлĕшри патшалăх политикине йĕркелессине тата вăя кĕртессине хутшăнасси; предприниматель сообществипе килĕштерсе ĕçлесси, бизнес представителĕсене Чăваш Республикинче предпринимательство ĕç-хĕлĕн аталанăвне явăçтарасси. Çӳлерех асăннисене тĕпе хурса предпринимательсен прависене хӳтĕлессин Чăваш Республикинчи уполномоченнăйĕ пулма Владимир Иванова çирĕплетнĕ. Çакăн пек ĕçе район шайĕнче те пурнăçламалла. Çавна май маларах тăратнă тата сĕннĕ кандидатурăсене ларура пăхса тухрĕç. Вĕсем вара хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе, шухăш-кăмăлĕпе паллаштарчĕç. Асăннă должноçра пулма тивĕçнĕ предприниматель пирки çитес вăхăтра пĕлтерĕпĕр.

Иккĕмĕш ыйту районăн инвестици тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвĕ тавра пулчĕ. Унпа район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев паллаштарчĕ. Чи малтанах Ростислав Николаевич республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çырури инвестицие çыхăннă хăш-пĕр самант çинче чарăнчĕ. «Инвестици ĕçĕ-хĕлĕшĕн лайăх майсем туса парасси республикăн ĕç тăвакан влаç органĕсен тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тӳрĕ тивĕçĕ шутланать, вĕсен ку енĕпе ĕçе тытăмлăн, тĕллевлĕн тата тухăçлăн йĕркелемелле.

Паян Чăваш Енре Чăваш Республикин Ĕç тăвакан влаç органĕсен лайăх инвестици климатне тивĕçтерес енĕпе тумалли ĕç-хĕл стандартне, Чăваш Республикин Инвестици декларацине, Чăваш Республикин 2020 çулчченхи Инвестици стратегине, инфратытăм объекчĕсен строительствин планне йышăннă».

Район шайĕнче те тĕллевлĕ ĕç ку енĕпе сахал мар пурнăçланать: республика, район экономикин ăнăçлăхĕшĕн тухăçлă тимлеме палăртакансем валли инвестици лаптăкĕсем хатĕрлеççĕ тата ытти те. Çак хатĕр лаптăксемпе официаллă сайтра тĕплĕнрех паллашма пулать, çавăн пекех предпринимательство тĕлĕшпе усă курма май пур куçман пурлăх çинчен те инофрмаци унта çителĕклĕ. Апла пулсан асăннă субъект валли тимлемелли пур – çанă тавăрса вăй хумалла кăна.

Малашлăхлă инвестици сулйĕрĕсенчен пĕри – туризм. 2013 çулта федерацин «Раççей Федерацийĕнче шалти тата килсе çӳремелли туризма аталантарасси (2013 – 2018 çулсем)» тĕллевлĕ программине «Чăваш Енри халăх ушкăнĕсем» туризмпа кану кластерне тумалли проекта кĕртнĕ. Ăна пурнăçлани пирĕн республикăна килсе çӳрекенсен йышне икĕ хут ытларах ӳстерет. Проектăн пĕтĕмĕшле хакĕ 7, 5 миллиард ытла тенкĕпе танлашать, çав шутран 5,6 миллиард тенкине уйрăм инвесторсем хывĕç. Турист вăл – инвестор. Палăртма кăмăллă, Муркаш районĕн территорийĕнче те ку енĕпе ăнăçлă та илĕртӳллĕ тата паллă вырăнсем сахал мар.

– Эпĕ сире, пуçаруллă предпринимательсене, активлăрах пулма сĕнесшĕн. Пĕрлехи тăрăшулăхпа район ăнăçлăрах, унăн сăн-сăпачĕ татах хăтлăрах пулмалла, – терĕ Ростислав Николаевич предпринимательсене.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарассин канашĕнче вун виçĕ пуçаруллă предприниматель. Вĕсем тĕрлĕ мероприятире ырă кăмăллăхпа палăраççĕ. Унти йыш тĕлĕшпе хăш-пĕр улшăну пулса иртрĕ, хисепĕ çавах юлчĕ.

Çавăн пекех ытти ыйту тавра та пулчĕ калаçу ларура.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн

# Тав тăватпăр

Пиккикасси ялĕнче пурăннă Антонина Егоровна Васильевăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн «Оринино» хуçалăха, Муркашри ООО «Универмаг» ĕçченĕсене, тăвансене, юлташĕсене, ял-йыша, пускилсене, унта пынă мĕн пур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Васильевсен, Степановсен çемйисем.**

Уйкас Хачăк ялĕнче пурăннă Агния Степановна Шаровăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн ял-йыша, кӳршĕсене, тăвансене, Шатровсен, Майковсен, Блиновсен çемйисене, унта пынă мĕн пур çынна чĕререн тав тăватпăр. Йывăр вăхăтра пирĕнпе пĕрле пулнăшăн сирĕн пурнăç яланах ăнса пытăр.

**Шаровсен, Пушкинсен çемйисем.**

Юнкă ял тăрăхĕнчи Канаш выççăлккинче çуралса ӳснĕ Петр Васильевич Поляков 86 çула кайса нумаях пулмасть пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Сутулӳпе кооператив техникумне тата Хусанти финанспа экономика институтне вĕренсе пĕтернĕскер малтан строительство управленийĕн 2-мĕш трестĕнче тĕп бухгалтера, хыççăн трест управляющийĕнче пенсие тухичченех ĕçлерĕ. Чăваш АССР тата РСФСР Тава тивĕçлĕ строителĕн ячĕсене тивĕçнĕ.

Хамăрăн сумлă тăванăмăра тата хаклă çыннăмăра юлашки çула ăсатма пулăшнисене пурне те пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Поляковсен, Терентьевсен, Илугинсен, Салдакеевсен, Тарасовсен, Кузьминсен, Романовсен, Тяминсен, Любимовсен, Федоровсен, Казаковсен, Питерновсен çемйисем.**

Муркашра пурăннă Виталий Иванович Тодинова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн РФ Шалти ĕçсен министерствин Муркашри пайĕн коллективĕпе ветеранĕсене, пускилсене, тăвансене, ял-йыша, юлташĕсене, унта пынă мĕн пур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Тодиновсен, Малаевсен çемйисем.**

Объявления


**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:250801:1 о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Яковлев Дмитрий Вячеславович, Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, д. Юрмекейкино, ул. Никольского, д. 62.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:250801:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Александровское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

***

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:1 о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Кетмелева Галина Владимировна, Чувашская Республика, г. Новочебоксарск, ул. Строителей, д. 32, кв. 206.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:072501:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.


Миграци службинчен

# Украинăна каяс тесен

Раççей Федерацийĕ тĕнчере хăйĕн вырăнне тата пĕлтерĕшне анлăлатнă-пысăклатнă май пирĕн граждансем валли те ют çĕр-шывсене тухса çӳреме çулсем уçăлаççĕ. Паянхи куна пирĕн граждансем унченхи Совет Союзне кĕнĕ республикăсене – хальхи Абхази, Беларуç, Казахстан, Киргизи, Таджикистан, Украина тата Кăнтăр Осети çĕр-шывĕсене – тухса çӳреме Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспорчĕсемпе çеç усă курасçĕ пулсан, çывăх вăхăтрах ку лару-тăру тĕпрен улшăнать.

РФ Президенчĕн хушăвне пурнăçласа тата миграци тĕрĕслевне эффективлă пурнăçлас тĕллевпе федерацин миграци служби Раççей гражданĕсене Киргизи, Таджикистан, Украина çĕр-шывĕсене 2015 çултан тытăнса ют çĕр-шыв паспорчĕсемпе çеç тухса çӳремелли йĕрке хатĕрлет.

Çавăнпа та асăннă çĕр-шывсене вăл е ку ыйтупа тухса çӳрекенсене ют çĕр-шыв паспорчĕсем хатĕрлеме ыйтатпăр.

**Л. ПЛЕЧОВА,**
**Раççейри федерацин миграци службин территори пункчĕн пуçлăхĕ.**

Следстви комитетĕнчен

# Ертӳçĕне ют пурлăх илĕртнĕ

«Шомикри психоневрологи интернячĕ» Чăваш Республикинчи бюджет учрежденийĕн ертӳçин саккунсăр ĕçĕ-хĕлĕ пирки маларах çырнăччĕ. Асăннă учреждени ертӳçи çакăнта тимлекен кассир-бухгалтер шанăçне кĕрсе кунти укçатенкĕне хăй кĕсйине чикме шухăшланă. Çакăнта хӳтлĕх тупнă пациентсем валли тĕрлĕ япала туянма тесе учреждени кассинчен 73440 тенкĕ илнĕ. Кассир ертӳçĕ шухăшĕ-тĕллевне аванах пĕлнĕ, апла пулин те унăн çавăн чухлĕ укçа кăларса хума тивнĕ. Паллах, ултавçă укçана çак тĕллевпе усă курман, çавна май учреждени складне нимĕн те кӳрсе килмен. Анчах та ертӳçĕ кассăна тавар туяннине çирĕплетекен тĕрлĕ чек тăратнă. Çапла вара вăл укçа-тенкĕне хăй кĕсйине чикнĕ. Çакăнта тăратмалли чексем унăн маларахах хатĕр пулнă. Çавăн пекех саккуна хирĕçлекен ытти самант татах та пур кунта. Çапла вара вăл хăй ирĕкне учрежденин укçипе хуçаланнă, ыттисем ăна хирĕçлеймен. Укçа тăкакланине тӳрре кăларассипе каярах тĕрлĕ йышăну тунă. Çапла вара ертӳçĕ тĕлĕшпе РФ УК 292 статйян 1 пайĕнчи тата 159 статйян 3 пайĕнчи йĕркесене сĕмсĕррĕн пăснипе уголовлă ĕç пуçарма йышăннă.

**И. ФЕДОТОВ,**
**следователь.**

Иксĕлми пултарулăх

# Маттур, эсĕ Мария!



Шкул пурнăçĕнче яланах малтисен ретĕнче пулнăскер студентсем хушшинче те кайра пулма шутламасть Мария Сытина. Вăл иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Юнкă шкулне ылтăн медальпе вĕренсе пĕтерчĕ. Шкул тата район чысне тивĕçлĕ хӳтĕлесе вăл республикăри, Раççей шайĕнчи тĕрлĕ конкурса хутшăнса пĕрре кăна мар малти вырăнсене тивĕçрĕ. Пирĕн маттур Мария Суздальтен, Мускавран, Туапсерен экологипе туризм конкурсĕсенчен çĕнтерӳçĕ пулса таврăнчĕ.

Мария шкул пĕтернĕ хыççăн хăй пурнăçне экологи енĕпе çыхăнтарас терĕ. Халĕ вăл Йошкар-Олара аслă пĕлӳ илет. Шкулта вĕреннĕ чухнех биологипе экологие кăмăлланăран эколог специальноçне суйларĕ. Студент пурнăçĕ килĕшнĕрен ĕнтĕ вĕренӳ сехечĕсемсĕр пуçне тĕрлĕ конкурса та хутшăна ĕлкĕрет. Акăлчан чĕлхи олимпиадинче иккĕмĕш вырăн çĕнсе илчĕ, экологи предмечĕпе çыхăннă конференципе те чи пултарулли пулчĕ.

Раштав уйăхĕн 19-мĕшĕнче вара Мария «Мисс Волгатех-2013» конкурса хутшăнса факультет чысне хӳтĕлерĕ. Вăл вунă хĕр хушшинче «Мисс «Çамрăк талант» номинаци çĕнтерӳçи пулчĕ. Эпир хамăрăн пултарулă Марийăна малашне те пурнăçра, вĕренӳре ăнăçупа çитĕнӳ сунатпăр.

**Е. БИРЮКОВА.**

НПФ «Промагрофонд»

# В Новый год – с НПФ «Промагрофонд»!

Считанные дни остаются до Нового 2014 года, в который Негосударственный Пенсионный Фонд «Промагрофонд» готовится войти уверенно и динамично!

Сегодня Фонд продолжает демонстрировать значительный прирост пенсионных активов. По сравнению с прошлым годом объем пенсионных накоплений увеличился на 42,75 % и на данный момент составил 47,68 млрд. рублей. Имущество для обеспечения уставной деятельности превышает 1,28 млрд. рублей, собственное имущество - 51 млрд. рублей.

НПФ «Промагрофонд» входит в ТОП 10 российских негосударственных пенсионных фондов. В настоящее время более 1, 6 млн человек доверили управление накопительной части пенсии нашему Фонду; негосударственную пенсию формируют более 57 400 россиян; около 8 000 граждан, имеющих пенсионные основания, получают дополнительную пенсию от НПФ «Промагрофонд».

С начала 2013 года НПФ «Промагрофонд» осуществил выплаты пенсионных накоплений более 18 000 человек (в т.ч. – более 300 жителям Чувашии) на общую сумму более 176 000 000 рублей.

В преддверии самого долгожданного, волшебного и яркого праздника желаю всем моргаушцам исполнения заветных желаний, загаданных с боем курантов, уюта в домах и как можно больше светлых и радостных дней!

Пусть новый 2014 год станет благополучным и удачным на новые свершения и начинания! А НПФ «Промагрофонд» готов помочь вам выбрать верные решения, направленные на сохранение стабильности в будущем и уверенности в завтрашнем дне!

**Директор Филиала НПФ «Промагрофонд» в г. Чебоксары.**

***Подробную информацию о выплатах средств пенсионных накоплений и о том, как стать клиентом Фонда, можно получить по телефонам (8352) 641-911, 641-912 или на сайте Фонда www.promagrofond.ru.***

***Наш адрес: г. Чебоксары, пр. Ленина, д.7, подъезд 3, этаж 4.***

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельного участка

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:072501:1712, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, для сельскохозяйственного производства, площадью 17920 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

## Постановление

**Чувашская Республика**
**Моргаушский район**
**Администрация Кадикасинского сельского поселения**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**18.12.2013 г. № 205**
**д. Кораккасы**

**Об утверждении проектов планировки территорий, примыкающих к д.Чурикасы Кадикасинского сельского поселения с восточной стороны и к д. Кадикасы Кадикасинского сельского поселения с северной стороны**

В соответствии с Федеральным законом от 06.10.2003 г. № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», статьей 46 Градостроительного кодекса Российской Федерации, Уставом Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, протоколом № 1 и заключением публичных слушаний от 27.11.2013, опубликованными в газете «Знамя победы» от 04.12.2013 г., на основании заявления администрации города Чебоксары от 22.10.2013 г. № 29/01-5028 постановляет:

1. Утвердить проекты планировки территорий, примыкающих к д. Чурикасы Кадикасинского сельского поселения с восточной стороны и к д. Кадикасы Кадикасинского сельского поселения с северной стороны (прилагается).

2. Настоящее постановление опубликовать в средствах массовой информации и на официальном сайте администрации Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

3. Контроль за выполнением настоящего постановления оставляю за собой.

**Глава Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики Г.Г. ЛЕБЕДЕВ.**

**Приложения**



* * *

Администрация Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельных долей, находящихся в общей долевой собственности СХПК им. Кирова, 3962,4 балло-гектаров и СХПК «Динамо» 5018,4 балло-гектаров муниципального образования Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики в собственность по цене, определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади, соответствующей размеру этой земельной доли, расположенной по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, кадастровый номер 21:17:200701:316.

Заявления принимаются в течении шести месяцев с даты опубликования по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Тораево, ул. Базарная, д. 5.

* * *

**Мартăн виççĕмĕшĕнче пăруламалли хура-шурă тынашки сутатăп. Тел.: 8-906-132-05-36.**

* * *

**Аттестат о среднем образовании А 0989299, выданный в 1996 году Орининской средней школой им. Колбасовой Веры Павловны, считать недействительным.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Срок 1 день. Каждый 3 потолок в подарок. Кредит, рассрочка.** 3-5. **Тел.: 8-937-955-33-00.**

**Продаю автомобиль ВАЗ-21120 синего цвета, в хорошем состоянии, 2001 года выпуска. Сигнализация, зимняя резина + летняя. Цена 90 т. руб. Торг. Тел.: 8-906-381-23-17.**

**МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ДВЕРИ, ЖАЛЮЗИ, МЕБЕЛЬ НА ЗАКАЗ.** 3-5. **Тел.: 8-937-955-33-00.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Бурение индивидуальных колодцев и скважин. Кольца колодцев ж/б (замковые, простые) D-0.7;1.0;1.5, крышки днища. Доставка. Установка. Тел.: 8-902-327-82-52.** 12-12.

* * *

**Январь уйăхĕнче улттăмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-987-760-18-61.**

* * *

**Продаются березовые дрова. Тел.: 8-903-065-58-68.** 2-2.

* * *

**Продаю автомобиль ВАЗ-2114, 2005 года выпуска, не гнилой, не битый, недорого, новогодняя скидка. Возможен обмен. Тел.: 8-937-371-28-09.** 1-2.

* * *

**Продаю земельный участок 40 сот. под строительство дома в с. Юнга. Газ, вода рядом. Тел.: 8-987-668-53-42, 8-917-675-45-38.**

* * *

**Качакасем сутатăп. Тел.: 8-987-668-53-42.**

* * *

**Февраль уйăхĕнче пăруламалли хура тĕслĕ ĕне (шурă вырăнсем пур) сутатпăр. Тел.: 8-906-131-60-25.**

* * *

**НОВОГОДНИЕ СКИДКИ! Продаем пшеницу, ячмень, рожь. Тел.: 8-987-760-57-71, 8-919-653-25-41.** 3-5.

* * *

**Продается зерно. Тел.: 8-965-688-90-49.**







* * *

**Предновогодние скидки на мед цветочный, урожай 2013 года, цена – 250 руб. Тел.: 8-908-309-66-75.** 6-10.

* * *

**СТРОЙМАТЕРИАЛЫ. Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83.** 3-10.




**Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 (с торца здания Дома быта). Тел.: 62-3-80.** 6-10.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 8-10.

**Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР 200 каналов – 7500 руб. ТЕЛЕКАРТА 50 каналов – 3500 руб.** 7-10. **Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.**

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36.** 7-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел.: 8-927-667-40-92.** 32-33.




**Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»**
* Представительство в судах по всем видам споров;
* Регистрация, ликвидация организаций, ИП;
* Подготовка исков, составление договоров;
* Сопровождение сделок с недвижимостью, в.т.ч. земельными участками: оформление в собственность, в аренду, регистрация;
* Взыскание по КАСКО и ОСАГО, дела по ДТП;
*Услуги по оценке имущества;
* Бухгалтерский и кадровый учет.
Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119.
Тел.: 62-4-43. сот. 8-903-358-84-64.
г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел.: 44-64-48.
E-mai:l vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru




* * *

**Вăкăрсем, тынасем, пăрусем туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13.** 1-2.

* * *

**Услуги репетитора по биологии. Тел.: 8-960-308-39-35.**

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:121301:1 о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Клементьева Вера Михеевна, Чувашская Республика, Чебоксарский район, п. Сюктерка, ул. Волжские Зори, д. 1 «А», кв. 6.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:121301:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

Муркаш райпо коллективĕ универмагра сутуçă пулса ĕçлекен Э.Р. Степановăн амăшĕ
**Антонина Егоровна ВАСИЛЬЕВА**
сарăмсăр вилнĕ пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Пирĕн хисеплĕ çывăх çыннăмăр
**Антонина Егоровна ВАСИЛЬЕВА**
пирĕнтен вăхăтсăр ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Эпир, пиччĕшĕсем, аппăшĕ, шăллĕ, йăмăкĕсем, пысăк хухатушăн чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтеретпĕр.

Пирĕн çывăхран та çывăх юратнă анне
**Антонина Егоровна ВАСИЛЬЕВА**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тӳрлетейми çухатушăн чĕререн хурланса пĕлтеретпĕр.

## Прогноз погоды

| | среда 25 декабря | | | | четверг 26 декабря | | | | пятница 27 декабря | | | | суббота 28 декабря | | | | воскресенье 29 декабря | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | -1 | -2 | -3 | -1 | -4 | -4 | -2 | -3 | -5 | -5 | -3 | -4 | -6 | -5 | -3 | -6 | -6 | -5 | -3 | -5 |
| Давление мм | 750 | 753 | 753 | 754 | 754 | 754 | 754 | 755 | 756 | 756 | 756 | 757 | 757 | 757 | 757 | 757 | 757 | 757 | 757 | 757 |
| Влажность % | 88 | 89 | 88 | 90 | 90 | 89 | 89 | 88 | 89 | 87 | 90 | 89 | 88 | 83 | 85 | 87 | 88 | 87 | 86 | 82 |
| Ветер м/сек | 6 З | 3 З | 4 Ю-З | 2 Ю-З | 4 Ю-З | 5 Ю-З | 5 Ю-З | 2 Ю-З | 5 Ю-З | 5 Ю-З | 5 Ю-З | 2 Ю-З | 4 Ю-З | 4 Ю-З | 4 Ю-З | 3 Ю-З | 4 Ю-З | 4 Ю-З | 4 Ю-З | 3 Ю-З |
| Солнце восход / заход | | 09:23 | 16:22 | | | 09:24 | 16:23 | | | 09:24 | 16:24 | | | 09:24 | 16:25 | | | 09:24 | 16:26 | |
| Луна восход / заход | | 00:22 | 12:18 | | | 01:34 | 12:38 | | | 02:48 | 13:01 | | | 04:04 | 13:29 | | | 05:20 | 14:04 | |

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă служба Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 24.12.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4810.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.